Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен
тата архив ĕçĕн министерстви
Чăваш Республикин Наци библиотеки
«Чăваш кĕнеки» центр

ФЕДОР ПАВЛОВ:
артист, драматург, композитор

(литературăпа музыка каçĕн сценарийĕ)

Шупашкар
2012

ББК 78.381.9:83
П 12

Редакци совечĕ: Н. Т. Егорова
Т. М. Баймушкина
Г. П. Соловьева

Кăларăмшăн яваплă:
Г.П. Соловьева

Хатĕрлекенĕ:
Л. Г. Тестова

Федор Павлов: артист, драматург, композитор : литературăпа музыка каçĕн сценарийĕ / Чăваш Республикин Наци библиотеки ; хатĕрлекенĕ Л. Г. Тестова. – Шупашкар, 2012. – 14 с.

Компьютерпа пичетлекенĕ: Л. Г. Тестова
Версткăлаканĕ: Е. Н. Федотова

© Чăваш Республикин Наци библиотеки, 2012

Пысăк та çутă зал. Экран çинче Федор Павлович Павловăн портречĕ курăнать, пысăк сас паллисемпе «Федор Павлов: 120 çул» тесе çырнă. Чĕрĕ чечексем, тĕрлĕ тĕслĕ шарсем, чăваш тĕррисемпе алшăллисемпе зала илемлетнĕ. Залра композитăра халалланă стенд – тĕрлĕ фотографисем (спектакльсенчи сăн ӳкерчĕксем), кĕнекесем, афишăсем.

Уяв каçне шкул ачисене, аслисене, май пулсан, композиторсемпе çыравçăсене чĕнме пулать.

Уява хутшăнакансем:

- *1-мĕш ертсе пыракан*
- *2-мĕш ертсе пыракан*
- *Вулакансем*
- *Ташлакансем*

Музыка илтĕнсе каять, таçта аякра халăх шавĕ. Хор юрлани илтĕнсе каять – малтан вăраххăн,кайран вăйлăн, туллин янă-рать. Юрри пĕтсен е ăна пĕчĕккĕн сӳнтерсе пырсан, сцена çине каçа ертсе пыраканĕ тухать. Экран çинче иртнĕ ĕмĕрти Мускав урамĕсен сăн ӳкерчĕкĕсем ылмашăнса пыраççĕ.

1 е. п. 1923-мĕш çул. Мускав хули. Урамсенче, скверсенче тĕрлĕ-тĕрлĕ халăх чĕлхи янăрать. Çĕршывăн тĕп хулинче Раççейри ял хуçалăхăн пĕрремĕш выставки иртет. Хăйсен çитĕнĕвĕсемпе тĕрлĕ халăхсем мухтанаççĕ. Чăваш Республикин те уйрăм павильон пур. Выставкăра пирĕн юрăçсем, ташă, музыка ăстисем наци йăла-йĕркисемпе, культурипе паллаштараççĕ. Пурте чăваш кĕписемпе. (*Сцена çине чăваш наци тумĕ тăхăннă çынсем тухаççĕ. Выставкăпа стендсене пăхаççĕ. Кĕвĕ янăрса каять. Чăваш наци тумĕ тăхăннă çынсем чăваш ташшине ташлама пуçлаççĕ – ăна малтанах хатĕрлесе хумалла*).

Ташă пĕтет – халăх сцена çинчен саланать. Иккĕмĕш ертсе пыракан тухать.

2 е. п. Мускавран ВДНХара иртнĕ уявран чăвашсем пĕтĕм Раççейпе виççĕмĕш вырăн йышăнса таврăннă. Çак хор чăваш

халăх юррисемпе ытти халăхсен чĕрисене тыткăнларĕ. Ăна йĕркелекенĕ, ертсе пыраканĕ вара – Федор Павлович Павлов композитор, драматург, поэт, тĕпчевçĕ пулнă.

1. е. п. Паянхи каç эпир çак тĕлĕнмелле ăста, нумай енлĕ талантлă çын пултарулăхĕпе паллашăпăр.

2. е. п. Чăваш юрри кун пек шая çĕкленессе вăл нихăçан та иккĕленмен. Анчах нумай тăрăшмалла, ĕçлемелле пулчĕ ăстаçăн. Унăн пурнăçĕ телейлĕ пулман: вăл икĕ хут авланнă – иккĕшĕнче те ăнăçсăр. Юратасса вара Капитолина Эсливановăна çеç тарăн та пĕр шанчăксăр туйăмпа юратнă.

1. е. п. Композитор-çыравçăн нумай алçырăвĕ çухалса пĕтнĕ. Вăл вилнĕ хыççăн унăн архивĕнчи документсем тĕрлĕ çынсен аллинче пулнă, каярах вĕсен йĕрĕсем çухалнă. Паян чечек хума унăн палăкĕ те çук, вилтăприйĕ те…

2. е. п. 1931-мĕш çулта Федор Павлов йывăр чиртен сипленме инçетри Сочи хулине çитнĕ, хăйĕн юратнă çĕршывне урăх таврăнайман. Ăна пытарнă масар тĕлĕнче халĕ шоссе çулĕ иртет. Анчах халăх асĕнче ун ячĕ ĕмĕрлĕхех юлчĕ.

1. е. п. Федор Павлович Павлов 1892 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьелĕнче, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Шкулта вăл революци çулĕсенче вĕреннĕ. Час-часах çывăхри ялсенче хресченсемпе полици хушшинче пулса иртекен тытăçусем пирки илтнĕ. Хăй аса илнĕ тăрăх, хăш чух, пухăнса, ачасем революци юррисене юрланă. Ун чухне Федор 15-ре çеç пулнă.

1. е. п. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче çунат сарнă çамрăк тăван халăх культуришĕн пĕтĕм чун-чĕрипе хыпса çуннă. Халăх пултарулăхĕн ахах-мерченне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса, вăл пархатарлă та сумлă ĕç тунă.

2. е. п. Кам пĕлмест-ха пирĕнтен «Шупашкар туйи», «Пирĕн урам анаталла», «Тӳнкки-тӳнкки», «Сĕрен» т. ыт. чăваш халăх юррисене? Вĕсем паян та çамрăксен вăййисенче, тĕрлĕ концертсенче пит хитрен янăраççĕ. Çавсене илемлетнĕ вăхăтра

Павлов хӑй те ҫамрӑклӑх юррисем хывнӑ. Каярахпа вӗсем те халӑх юрри-такмакне куҫнӑ. Ку тӗлӗшпе «Вӗлле хурчӗ – ылтӑн хурт» юрра ыррӑн палӑртса хӑварни те килӗшӳллӗ. Итлесе пӑхар-ха ҫак юрра.

Ку юрӑ ҫинчен эпир композитор-ҫыравҫӑн поэзине пӑхса тухнӑ май каярах татах калаҫӑпӑр-ха.

1. е. п. Федор Павлов – чӑвашсен профессилле музыкине пуҫарса яраканӗсенчен пӗри. Ҫамрӑк талантсене пулӑшнипе пӗрлех вӑл тӗрлӗ пултарулӑх коллективӗсене чӑмӑртанма пулӑшса та сахал мар тар тӑкнӑ. Иван Яковлев канашне итлесе, Чӗмпӗрти тӗн семинаринче вӗренсе тухать, учитель пулма ирӗк илет. Тӑван шкулне таврӑнса ачасемпе музыка енӗпе ӗҫлеме тытӑнать.

2. е. п. Ҫакӑнтан пуҫланать те ӗнтӗ Федор Павловӑн пултарулӑх ҫулӗ. Исаев Мӗтри (Дмитриев) вӗрентекен, Степан Максимов, Капитолина Эсливанова пулӑшнипе шкулта вӗсем пысӑк хор, симфони оркестрӗ йӗркелеҫҫӗ, сцена ҫинче Михаил Глинкӑн «Иван Сусанин» оперин пайне лартаҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗн юррисене пухса пичетлеҫҫӗ – музыка ӗҫне шаларах та шаларах кӗрсе пыраҫҫӗ ҫамрӑксем.

1. е. п. Ф. Павлова музыка ҫулӗ ҫине кӑларас ӗҫре Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчи Иван Митрофанович Дмитриев музыка учителӗн тӳпи те пысӑк. Вӗрентекен вилнӗ хыҫҫӑн унӑн ӗҫне Федор Павлов малалла тӑсать, драматург ӗҫне пӑрахӑҫлать:

2. е. п. «Чӑвашсен чи тыткӑнлакан та вӑйлӑ пултарулӑх вӑл – юрӑ. Мӗн вӑл театр? Театрта ҫыннӑн чунӗ курӑнмасть», – ҫапла палӑртнӑ вӑл хӑйӗн пӗр ӗҫӗнче. Тӗрлӗ халӑхсен юррисене тишкернӗ май вӑл ҫапла ҫырать: «Кӑнтӑр халӑхӗсем питӗ хӑвӑрт «вӗресе каяҫҫӗ», кӑмӑлӗ хӑвӑрт улшӑнать вӗсен. Юррисем те ҫаплах: вылянчӑк, савӑнӑҫлӑ, вӗри. Анчах чӑвашшӑн вӗсем – ача вӑййи пек ҫӑмӑлттайтарах».

1. е. п. Ҫурҫӗр халӑхӗсен вара пачах урӑхла – вӗсен кӗввисем пӑлхантаракан, чӑваш чунӗнче тӑвӑл кӑларакан, анчах

канăç кӳмен пулăм. (*Икĕ юлашки репликине каланă чух кăнтăр тата çурçĕр халăхĕсен кĕввисене хуллен ямалла*).

2. е. п. Халăх пурнăçĕ музыкăра палăрнă пекех, ташăра та сăнарланать. Федор Павлов шухăшĕпе, чăваш музыкин шайĕ Европăри музыка искусствинчен пĕрре те кая пулман. Кĕвĕ-çемĕ çеç унăн пĕтĕм пурнăçĕ тăрăх татăлми йĕр хăварса пырать, каярах вара вăл ыттисене пурне те çĕнтерсе «пуç» пулса тăрать.

1. е. п. Композитор ачасене вĕрентнĕ, хора тата оркестра ертсе пынă, оркестрта, ансамбльте сĕрме купăс каланă, халăх юррисене пуçтарнă, чăваш музыкин историйĕпе теорине тĕпченĕ, критик та, юрăç та пулнă.

2. е. п. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче учитель пулнă чухнех ачасен хорĕпе Федор Павлов оркестр жанрĕсемпе ĕçленине палăртрăмăр. Вăл хăй тĕллĕн вĕренсе пынă, музыкăпа кăсăкланнă. Ун чухнех пулас композиторăн чăваш оперăпа симфони музыкине йĕркелес ĕмĕт тĕвĕленет.

Залра майĕпен «Сарнайпа палнай» симфонилле фантази вăраххăн янăрать. Ертсе паракан хăйĕн сăмахне малалла тăсать.

1. е. п. Вăл вырăс классикĕсен произведенисене каçса кайсах тишкерет, итлет, вылять. Вĕсен йăлисене (традицийĕсене) тĕпе хурса 1928-мĕш çулта «Сăрнайпа палнай» ятлă пысăк симфони оркестрĕ валли çырнă симфониллĕ фантази çуралать. Вăл чăваш музыка искуствинче наци симфонисенчен пĕрремĕшĕ шутланать.

Пĕр çур минут кĕвĕ хыттăн янăрать. Кайран ун сассине пĕчĕккĕн чакарса пымалла. Е ташă пек инсценировка лартмалла – хĕрпе каччă ташлаççĕ – символла – пĕри Сăрнай сăнарĕ, тепри – Палнай.

2. е. п. Сăрнай – чăвашсен авалхи музыка инструменчĕ. Вăл волынка (шăпăр) евĕр инструмент. Палнай – тутапа каламалли хатĕр – губная гармоника. (*Ӳкерчĕкĕсене кăтартсан аван*). Произведение Павлов халăх мотивĕсем тăрăх çырнă.

1. е. п. Автор вăхăтсăр çĕре кĕнĕ хыççăн фантази партитури çухалнă. Ăна халĕ те тупайман. Хальхи вăхăтра «Сăрнайпа Палнай» С.И. Габер 1932 ç. оркестрăн пĕчĕк составĕ валли çырни янăрать.

2. е. п. Тап-таса та тăп-тăрă музыка! Сарнайпа Палнай пĕр-пĕринпе ăмăртса, тĕлĕнмелле хаваслă кĕвĕсем калаççĕ. Ку произведени пирĕн чăваш музыкинче пысăк калăплă произведенисем çырма май пуррине, ку тĕлĕшпе халăх музыки тĕлĕнмелле пуяннине кăтартса пачĕ.

1. е. п. 1920-мĕш çулсенче Федор Павлов пуçĕпех кĕвĕ-юрă тĕнчине парăнать. Музыкăра тухăçлă ĕçленĕ май, чăваш драматургине пуçарса яраканĕ, сăвăсем çырма пăрахать.

2. е. п. ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче наци литературипе искусстви вăйлă аталанма пуçланă. Николай Шупуççынни, Константин Иванов, Николай Шелепи пек авторсем чăваш поэзин малтанхи ăсчахĕсем (*мудрец, мастер, изобретатель*) пулнă. Вĕсемпе танлаштарсан Ф.Павлов хăйне дилетант тесе шутланă, çырнă сăввисене «альбом сăввисем» çеç тенĕ. Асăннă поэтсен шайне çитеймессе сиснĕ вăл, çавăнпа та хăйне урăх хушăра шыранă.

1. е. п. Литература каçалăкĕнче те пултаруллăн ĕçлесе Ф.Павлов тарăн йĕр хăварнă. Унăн лирики çинчен сăмах хускатнă май, поэзи унăн ĕçĕ-хĕлĕнче тĕпре пулманнине те палăртмалла. Анчах композитор-çыравçăн поэзири пултарулăхне палăртмасăр хăварма пултараймастпăр.

2. е. п. Вĕреннĕ чухне çырнă сăввисене çамрăк Федор ытларах хăйĕн тус-юлташĕсене халаллать. Хавахалану саманчĕсенче çырăннă экспромтлă йĕркисем те тĕл пулаççĕ хăш чухне. Чи малтанхи сăввисене поэт 1910-мĕш çулпа палăртнă, анчах та хăш-пĕрисене вăл иртерех те çырма пултарнă.

1. е. п. Чăвашла çырнă сăвăсенче («Вĕлле хурчĕ…», «Экспромт», «Савнă хĕр…») юрă кĕвви-çемми, ритмика яр-уççăн палăрса тăрать.

(«Вĕлле хурчĕ» сăвва вулакан çын тухать. Шăппăн чăваш кĕвви янрăть – авторăн произведенийĕ те пулма пултарать е мĕнле те пулин классикăллă хайлав):

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
Мĕншĕн эсĕ нăрлатăн?
Сарă чечек тăрринче
Çавăрăнса çӳретĕн?

Сарă чечек тăррине
Пыллă карас терĕн-им?
Шанса каяс илемне
Çутă сывлăм терĕн-им?

Ах, шухăшăм, шухăшăм!
Мĕншĕн эсĕ пăтранан?
Сарă хитре хĕрĕшĕн
Мĕншĕн ăша çунтаран?

Сарă хĕрĕн илемне
Хĕвел çутти тетĕн-им?
Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
Çав нăрлатать, çаврăнать.

Ман ăшра та çавăн пек
Тĕрлĕ шухăш пăтранать,
Хитре сарă хĕрĕшĕн
Çамрăк чуна çунтарать.

1. е. п. Ку сăвă-юрăра эпир поэт халăх кĕввин поэтикине кăмăлланине, унăн мелĕсемпе витĕмлĕ усă курма пултарнине куратпăр. Лирика геройĕ хăйĕн ăшри туйăмĕсене, сарă хĕре пула çунакан чĕрин хусканăвĕсене, «сарă чечек» тăрринче вĕçекен

пыл хурчĕн сăнарĕпе танлаштарса тарăн уçса палăртать. Шанчăк та, иккĕленӳ те, тӳсĕмлĕн кĕтни те, ăш çунни те пур çав шухăш пăтраннинче.

2. е. п. Çакăнтах тепĕр туйăм йăва çавăрнă: ку вăл – ултав. Чечек ĕмĕрĕ кĕске, вăл часах шанса кайĕ, пыл хурчĕ çавна туймасть. Тен, лирика геройĕ те юратăвăн çунтаракан вучĕ часах сӳнессе курса тăрать, çапах та чуна çепĕççĕн ачашлакан ултавлă туйăма килĕнӳллĕн парăнать вăл: ăс-хакăл хăйĕн сивĕ, витĕр курăнакан чăнлăхĕпе чĕре сассине хуплаймасть.

1. е. п. Федор Павлов эткерĕнче вырăсла çырнă сăвăсем чылай упранса юлнă. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ, ĕçленĕ тапхăрта çырнă сăвăсене поэт 1913-мĕш çулта «Памятник моей юности» ятлă поэзи тетрадĕнче çырса хăварнă. Каларăмăр ĕнтĕ, хăй çырнă сăвăсене автор «альбом сăввисем çеç» тесе хакланă. Ку тетраде вара çунтарсах ярасшăн пулнă.

2. е. п. Телее, Т. П. Парамонов композитор ăна чарнă. Алçырура, темиçе чăвашла сăвăсăр пуçне, пĕтĕмпех вырăсла çырнă поэзи хайлавĕсем. Апла пулин те вĕсем авторăн эстетикăлла идеалне, унăн музыкăпа уйрăлми тачă çыхăннă поэзи культурине яр уççăн палăртаççĕ.

(*Вырăсла çырнă сăвви янăрать – «Колыбельная песнь моей подруге»*):

Друг мой нежный, друг мой вечный,
Я тебе в тоске сердечной
        Песенку спою,
Ты ж, свои закрывши глазки,
Слушай песню кроткой ласки:
        Баюшки-баю!
Улыбнись своей красою
И, склонившись головою
        У меня к груди,

Обойми меня рукою,
В мире, с тихою душою
        Слушай и засни.
Счастье реет между нами,
Счастье чудными дарами
        Голову кружит,
А любовь, миг единенья,
Уст желанных освященье
        Светом озарит.
Этот миг волшебный счастья
Без тоски и без участья
        Ты не сможешь ждать,
Но в груди согретый пламень
Твердой верою, как камень,
        Будет век сиять.
И восторга дух томленный,
В миг блаженства обновленный
        И святой наряд
Светом жизни в тайне храма
Вместе с дымкой фимиама
        Ярко загорят.
И тогда вдвоем с тобою
Будем жить святой мечтою
        О грядущих днях –
У тебя, моя голубка,
Будет крошечка-малютка
        В мягких пеленах (…)
И над ней, святой любовью,
Ты, склонишься к изголовью,
        Будешь напевать:
Спи, мой ангел, спи прекрасный!
Я тебе с любовью страстной
        Песенку спою;

Ты ж, свои закрывши глазки,
Слушай песню кроткой ласки:
Баюшки-баю!..

1. е. п. Ҫапла, паян эпир Федор Павлов драматург тата композитор пултарулӑхӗн хӑш-пӗр енӗсемпе паллашрӑмӑр. Енчен те, сире композиторӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ интереслентерчӗ пулсан, тӗплӗнрех ун ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен литературӑра вуласа пӗлме сӗнетпӗр.

2. е. п. Пирӗн уяв вӗҫленсе пырать. Паянхи каҫ сирӗн чӗрере йӗр хӑварасса шанас килет.

(«Сӑрнайпа Палнай» юрри хуллен янӑрать. Уяв каҫӗ вӗҫленчӗ).

УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

Кĕнекесем

Абрамов, В. А. Сăмахпа сăнар сипечĕ / В. А. Абрамов – Шупашкар, 1998. – 110 с.

Артемьев, Ю. М. Ĕмĕр пуçламăшĕ : 1900-1917 çулсенчи чăваш литература историйĕн очеркĕ / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар, 1996. – 295 с.

Артемьев, Ю. М. Чăн тӳпере çич çăлтăр / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар, 2010. – 253, [2] с.

Ахрат, И. Çул юхать, юхать... / И. Ахрат. – Шупашкар, 2000. – 183 с.

Давыдов-Анатри, В. И. Сăвăсем / В. И. Давыдов-Анатри. – Шупашкар, 1986. – 96 с.

Иванов, Н. И. Сердца живые звуки / И. Н. Иванов. – Чебоксары, 1989. –174 с.

Павлов Ф. П. - композитор и драматург / НИИ языка, литературы истории и экономики при Совете Министров ЧАССР. – Чебоксары, 1984. – 58 с.

Родионов, В. Г. Чăваш литератури (1917-1930-мĕш çç.) / В. Г. Родионов. – Шупашкар, 2005. – 351 с.

Эсхель, А. Вăхăт таппи: çулсем, çынсем, сăнсем / А. Эхель. – Шупашкар, 1982. – 304 с.

Статьясем

Авлук, А. Ĕçĕ пархатарлă, ячĕ сумлă / А. Авлук // Ялав. – 1992. – № 9. – С. 20.

Ахрат, И. Композитор трагедийĕ : Ф. П. Павлов çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май / И. Ахрат // Чăваш ен. – 1992. – 11-18 апр. (№ 15). – С. 8-12.

Ахрат, И. Музыка – Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче / И. Ахрат // Ялав. – 1998. – № 2. – С. 96-100.

Ваçанкка, Н. Ф. Ф. Павлов пурнăçĕпе ĕçĕсем. Музыка / Н. Ф. Ваçанкка // Сунтал. – 1931. – № 9. – С. 36-39.

Воронов, К. Халăх пултарулăхĕнчен вăй илнĕ / К. Воронов // Ялав. – 1951. – № 6. – С. 27-28.

Долгов, В. Чăваш искусствин паллă деятелĕ / В. Долгов // Ялав. – 1951. – № 6. – С. 27-28.

Егоров, В. Юратупа ирĕклĕх / В. Егоров // Тăван Атăл. – 1983. – № 9. – С. 58-62.

Иванов, Н. Илем / Н. Иванов, Н. Гилязева // Ялав. – 1982. – № 9. – С. 22-23.

Илюхин, Ю. А. Ĕмĕр асăнмалăх / Ю. А. Илюхин // Ялав. – 1957. – № 11. – С. 30.

Илюхин, Ю. А. Ф. П. Павлов / Ю. А. Илюхин // Ялав. – 1962. – № 9. – С. 3.

Илюхин, Ю. А. Чăваш литературипе музыкин классикĕ / Ю. А. Илюхин // Тăван Атăл. – 1982. – № 9. – С. 35-37.

Лашман, С. Çурхи шурăмпуç çăлтăрĕ / С. Лашман // Тăван Атăл. – 1972. – № 9. – С. 64-66.

Салампек, И. Ф. Павловăн халиччен пичетленмен сăввисем / И. Ф. Салампек // Ялав. – 1946. – № 7-8. – С. 39-40.

Юмарт, Г. Федор Павлов – лирик-поэт / Г. Юмарт // Тăван Атăл. – 1992. – № 9-10. – С. 56–57.

Илюхин, Ю. А. Симфоническая фантазия Ф. Павлова «Сарнай и палнай» // Вопросы чувашского языка, литературы и искусства. – Чебоксары, 1960. – С. 148–174.

Хайлавсем

Йĕс таканлă : нар. песня / обр. Ф. Павлова // Край родной. – Мелодия. – I гр.: 33 об/м. СТЕРЕО – с 3022165. – 1985.

Вăрман витĕр : нар. песня / обр. Ф. Павлова // Мефодий Денисов поет чувашские песни. – Мелодия. – I гр.: 33 об/м. Моно.

Самарские напевы : нар. песня / обр. Ф. Павлова // Чебоксарский сувенир. – Мелодия. – I гр.: 33 об/м. СТЕРЕО – с 3029935009. – 1990.